Национальни Собрани—улпутсен хыҫӗнђен пынӑ. Вӗсем Нансире пулнӑ пек ӗҫсем ҫине пит те хӑраса пӑхса тӑнӑ, ҫавӑнпа вӗсене пӗтересшӗн тӑрӑшнӑ. Ҫӗртме уйӑхӗн

29-мӗш кунӗнҫе каруҫ Национальни Сабранире „пӑлханакан“ салтаксене ҫарма тесе, Нансийе ҫарса ҫӳрекен ҫар йама хушнӑ. Ҫав ҫарса ҫӳрекен салтаксен пуҫлӑхӗ каруҫшӑн сунакан Буилье йатлӑ йанрал пулмалла тунӑ. Собрани, улпутсем хыҫҫӑн кайса, каруҫ хушнине тумалла тунӑ, ҫинҫен „пӑлханакансене пӗр шеллемесӗр ҫармалла, пӑлхав пуҫласа йанисене, пӗтӗм халӑха мӑшкӑл тунӑшӑн, хур-тунӑшӑн, пӗтермелле, тенӗ. Вӑйсӑрланнӑ каруҫпа, каруҫшӑн тӑрӑшакан офицерсем, ытти кирлӗ-кирлӗ-марпа пӗрлешсе улпутсем халӑх тапраннине пӗтересшӗн пулнӑ.

Ҫав каҫах Марат Париш урамӗсенҫе хӑй ҫырса пиҫетленӗ „Хӑрушӑ ӗҫ“ йатла хут ҫапса тухнӑ, Ун ҫинче вӑл: Нимӗнрен хӑрамӑнскерсем! Ҫав ӗҫе тарма ҫӑрӑшӑр! „Ҫарса ҫӳрекен“ ҫара хирӗҫ тӑма тӑрӑшӑр! Астӑвар-ха, тӑвансем, сирӗн йатӑрпа ларакан ҫынсем мӗнле ҫӑнкӑ, тарӑн шӑтӑк ҫаваҫҫӗ сирӗн ура пусмалли ҫӗре, ҫав шӑтӑка вӗсем сире тӗксе йама тӑрӑшассҫӗ. Камсем-ха вӗсем, ҫав сирӗн йатӑрпа ларакансем? Есир ҫав ҫынсене пӗтересшӗн марҫӗ-и? Кама вӗсем ҫиҫе йарасшӑн? Кам йунне вӗсем тӑкасшӑн тӑрӑшассҫӗ? Сире кама пӗтерттересшӗн йараҫҫӗ-ха? Камсем ҫав салтаксем? Сирӗн тӑванӑрсем мар-и? Вӗсем айӑплӑ-и, ҫук-и? Вӗсем айӑпсӑр, вӗсене халиҫҫенех ҫийессҫӗ, халиҫҫенех вӗсене асаплантарассҫӗ! Ах, турӑҫӑм—пӳлӗхҫем! Манӑн ҫӗре ҫуралат, ман ҫун ҫунат, кӑмӑл пӑтранат ҫав ӗҫ ҫинҫен шухӑшласа пӑхсассӑн. Есир, ыйха кайнӑ тӑвансем, ыйхӑран хӑҫан та пулин вӑранӑр-и? Ҫав ӗҫе тума парӑр-и? Хӑр тӑванӑрсене пере-пере вӗлернине пӗр пӑхса ҫеҫ тӑрӑршн? Ҫав ҫар сирӗн тӑванӑрсене пӗтерме пуҫлиҫҫен вырӑнӑрсенҫен хускалмасӑр тӑрӑр-ши? Нанҫи салтакӗсем айӑпсӑр! Вӗсене хӑйсене асаплантарса пӗтерессҫӗ... Вӗсем пӗр хӑйсене асаплантарнине ҫеҫ хирӗҫ тӑнӑ! Кам айӑплӑ? Вӗсен аслисем айӑпла! тесе ҫырнӑ.

„Ҫарса ҫӳрекен“ ҫар Нанҫийе кайнӑ. Нанси урамӗсенҫе салтак йунӗ, хура-халӑх йунӗ тӑкӑннӑ. Пӗр 3000 ҫин салтак, Нанси салтакӗсен хутне кӗнӗ. Нанси ҫухӑвӗ пӗтнӗ. „Ҫаракансем“ никама та шеллемен: вӗсен ҫиллипе 400 ҫына йахӑн хӗр-арӑм, аҫа пӑҫа пӗтнӗ.

Марат ҫав йун тӑкни пирки Национални Собранире Нансийе ҫар йама хушнисене ҫӑтса йарас пек ҫинӗ, пуринҫен ытла пуйансен туррисене—Мирабопа Лафайета ҫинӗ. Марат унҫенех Мирабо каруҫпа пӗр шухӑшлине, каруҫ ӑна укҫа тӳлесе тӑнине сиснӗ. Марат Мирабона Рикветти тесе йат хунӑ—Мирабо Итали ҫынни пулнӑ, вӗсен ҫемйин хушамаҫӗ—

Риккетти пулнă. Марат ун çинçен: Нумай пулмаç, пĕр ик çул ĕлĕк Риккетти йулашки йĕмне çĕтĕк—çатăк пухакана вăхăтлăха лесçе панă-ççĕ ултă ливр укçалла (икĕ тенке йахăн), халĕ хысйине ниçта çикме те пĕлмест, тĕрлĕ хаклă йапаля ăшĕнçе пуçса выртаť, теçетке-теçетке йерĕшке ураť, вĕсене тĕрлĕ куççенĕç иле-иле параť, тесе çырнă.

Марат Мирабо çав уйăхсем хушшинçе мĕн çухлĕ укçа пĕтерниие хисеплесе, шутласа тухнă. Çуртпа çĕр илме вăл виç мĕлйуна йахăн ливр (мĕлйун тенке йахăн) пĕтернĕ. Марат ун çинçен çапла çырнă хыççăн икĕ çул кайран, каруç çуртĕнçе хутсене пăхса тухнă çух,- Марат çăмахĕсем тӳрре тухнă, каруç çăпахах та Мирабона пит пысăк укçа тӳлесе пурăннă иккен.

Марат Лафайета пит те аван сăрласа çухăн—халăха пĕлтернĕ; вăл нимĕне йурăхсăр çын хушнипе сиккелеçен пукане, цĕр каруçа пуçапма вĕренне тунката çеç пулнă, Наполеон калавă тăрăх вăл ĕçе йурăхсăр „йĕвсĕк" пулнă.

Ухмахскер, каруç хушнипе темĕскер тума пултарнă Лафайет пуйансене пит те аван пулнă, вăл вĕсене аван астуса тăнă, çаванпа улпутсем, пуйансем мухтаса пĕтерме пултарайман. Вăл Напионални гварди патне (çав çара çухан çын кĕме пултарайман, унта çара улпут, пуйан тавраш ĕпулнă) пырсан, пуйан-салтаксем ăна курсан саваннипе кăшкăрнă. Нансире çав тĕрлĕ „мухтавлă" ĕç хыççăн, Лафайет хушнипе, гварди пуху тунă. Пухура Мецари гвардийе. Нансире çав тĕрлĕ „пысăк" ĕç тунăшăн тав тунă.

Çавăн хыççăн Лафайета тав-тумалла тунă. Вĕсем: Пуху, суйланă çынсене, савнă ăслă Лафайета тав-тума хушаť. Епир Лафайета çунтан йурататпăр, вăл мĕн калавиве пĕтĕмпех туса тăрăпăр. Лафайет патшалăха ырă тăвассине, епир пурсăмăр та пĕлсе тăратпăр. Хамăр суйланă çынсене, епир, патшалăх тăшманĕсем ун çинçен тĕрлĕрен суйса çырни, пирĕн кăмăла пăтратаť; патшалăх тăшманĕсем ун çинçен, ун мухтавне пĕтерес тесе йат-йани, пире пит те çилентерет, теме хушатпăр, тесе çырнă.

Лафайет çинçен „суйса йат—йанисенçен" пĕри паллах Марат пулнă. Вăл, пуйан—салтаксем çапла çырнине пĕлсен, аван (сентябрь) уйăхĕн 14-мĕш кунĕнçе тухас „халăх тусĕ" çине Лафайет çинçен тӳррипе çырса тухма пулнă. Лафайет, ăна пĕлсен, Марат хаçаçĕ çапăнакан çурта салтаксемпе пур йенçĕн те хупарласа илнĕ, пĕтĕм çурта çăлкар! тустарнă. Çапла Лафайетăн „мухтавĕ" пит те аван сыхланса тăма пултарнă.

Революци тапраннă-ҫух Марат каруҫа хирĕҫ ытла пыман. Пыра-пыра 16-мĕш Людовика вăл вăйсăр ҫын вырăнне хунă, вăл усалах мар-тăр тенĕ. Халăха хирĕҫ карус хушни карус ĕҫĕ мар, ăна канаш парса тăракансем, ăна ӳкĕтлекенсем пулĕ тенĕ. Ҫак канаш параканнисене, ӳкĕтлекеннисене сирпĕтсен, карус вăйне кашт ҫемҫетсен, каруҫа, ҫухăн — халăха ытла хирĕҫ тăма пултарасси ҫуккипе, хăварма та йурăт пулĕ, тесе шухăшланă. Пыра-пыра карус ҫинҫен Марат тĕрлĕ шухăшланă.

Ҫапла тĕрлĕ шухăшласси утă-уйăхĕн (июн) 21-мĕш кунĕнҫен пĕтсе ларнă: 1791-мĕш ҫулта ута уйăхĕн 21-мĕш кунĕнҫе ҫĕрле карус пĕтĕм ҫемйипе Паришрен тухса тарнă. Вăл Нансире салтаксене вĕлерсе пĕтĕрнĕ Буилье йанрал патне кайса, йут патшалăхсенҫен пулăшу илсе, революцилĕ Францийе хăйне тепĕр хут пăхăнтарасшăн пулнă.

Каруҫа, ҫул ҫинҫе палласа, утă-уйăхĕн 25-мĕш кунĕнҫе хĕҫ-пăшаллă ҫухăнсем кайалла Париҫе исе тавраннă.

Утă уйăхин 27-мĕш кунĕнҫе, каруҫа кайалла кӳнине кура, Марат: Астăвăр-ха, акă каруҫра ларакан вăрă—хураха, халăха ырăлăх—сывăлăх тăвас тесе хĕрес ҫуп-тунă ҫуп-илливе, хăй халăхне сутса йама тытăннăскере, ăна пĕтерес тесе тĕрлĕ вăрă—хурăхсемпе пĕр шухăша кĕнĕскере, ҫунсăр, ҫĕресĕр есреле кайалла илсе килҫĕҫ! Ана кӳрекенсен хушшинҫе вăл пĕр намăсланмасăр, пĕр хуйхăрмасăр ларат. Ёлĕк унăн аллинҫе тарҫăра тăнă халăх ăна ылханни пĕр те пуҫне кĕмен пус. Ун вырăнҫе кам та пулин урăххи пулсан, выравĕнҫех вилĕҫҫĕ. Вăл пĕр хăй хырăмĕ ҫинҫен ҫеҫ шухăшлат, унăн пуҫне пĕр тискер кайăк шухăшĕ ҫеҫ кĕрет. Вăл салтаксен аллинҫе-ҫух пĕр ан ыраттарăр мана, теме ҫеҫ пĕлнĕ. Унăн шухăшĕ пĕр ҫийеси-ĕҫесси ҫинҫе кăна пулнă, тесе ҫырнă.

Пуйансен аллинҫе ҫар тăнă, вĕсен хыҫҫăн Национальни Собрани пынă. Карус халăх алинҫе пулсан та, пуйансем вăйлă пулнă. Ҫĕртме уйăхĕн 17-мĕш кунĕнҫе 1791 ҫулта ҫухăн халăх Паришре Марсово поле Марс хирĕ йатлă вырăва пухăннă. Вĕсем Бурбонсене карус вырăнĕнҫен кăларасшăн пулнă. (16 мĕш Людовикăн тĕп йахĕ. Бурбон хушаматлă пулнă) Анҫах пуйансем халăха хирĕҫ ҫар тăратнă, пĕтĕм Марс хирне ҫухăн вилли тултарнă.

Пуйансем революцийе пĕтере пуҫланă, хăйсен тăшманĕсене ҫисĕ йарасса ҫитнĕ. Маратăн йулташĕсенҫен нумайĕшĕ тарса пĕтнĕ. Марат хаҫаҫĕ тухакан вырăна пĕтĕмпех тӳстарса пĕтерне, хаҫата пиҫет тăвакан хĕр-арăма тĕрмене хунă.

Робеспьер вăл вăхăтра жирондистсемпе вăрçă тапратнă. Вăл: Епĕ те варçăшăн тăратăп. Анђах, вăрçас пулсан, вăрçăшăн тăракансем пире ан улталатђĕр. Епĕ вăрçăшăн тăратăп. Анђах вăрçăра çара илсе пыракансем революцишăн тăрăшакансем, пире тыткăнра тытнă йĕркене хирĕç, пирĕн тăшмана хирĕç илсе пырђăр. Вĕсем халăх хушнипе туса тăђăр. Епĕ пире тĕрлĕ ултавçăсем илсе пырасса хирĕç!.. Çав вăрçă валли пире халăхшăн тăрăшакан, каруђ патĕнђе пуранса ултавама вĕреннисене мар, ађаранпа халăх тăшманĕсене курайман йанралсем парăр. Епир патшасене, карулсене пĕтерес тенĕ вăхăтра, пире вăрçа кайма çар министăрĕ, каруђ йытти, йе каруђ таврашĕ хушиђђен тăрар-и? Пуйансене, улпутсене, патша-каруђсене хирĕç пирĕн тăшмансемех-улпутсемех илсе каймалла-и? Çук! Епир вĕсен хыççăн каймăпăр, вăрçа хамăра хамăр илсе кайăпăр, тесе çырнă.

Марат вăрçа хирĕç тăнă. Хăйĕн йуратнă „халăх тусĕ“ пирвайхи хаçађĕ çинех вăл, вăрçă революци вăйне пĕтерĕ, халăх шухăшне, хăйĕн çивăхри тăшманĕ çинђен, урăх çĕрĕ илсе кайĕ, халăха хăй ĕçне тума памĕ, каруђа вăйлăлатĕ, тесе çырнă.

Каллех Марата пусмăрла пуçланă. Çу уйăхĕн (май) 4-мĕш кунĕнђе 1792 çулта жирондистсем Законадатели Собранире Марата тытса хупасси çинђен ĕç тунă. Законодатели Собрани Марата тĕрмене лартмалла тунă. Калех йулташĕсем патĕнђе пытанса çўремелле пулнă. Нийепле типографи хуçи (хаçат, кĕнеке çапакан машшинана типографи тесçĕ) ун хаçатне çапма илмен. Вĕсен, çар çыннисем ун хаçатне шыранă ђух, машшинасем çĕмĕрт-терĕсси штраф тўлеттерсси килмен.

„Халăх тусĕ“ çурла (июль) уйăхĕнђе çеç çĕнĕрен туха пуçланă. Марат мĕшĕн революцийе хирĕç тăракансем çийеле тухни çинђен çыра пуçланă. Вăл: Революци халăха хирĕç кайрĕ, вăл халăха хирĕç пыни питĕ пысăк хуйхă. Вăл пуçланнă ђухне халăха хирĕç тăракансем пĕрлешрĕç, вĕсем кампа та пулин пĕр капаша кĕре-кĕре, хăшне хăшне укçалла тытса, унђухнех вăйлăланса çитрĕç. Сăккун кăларакан пухусен çыннисенђен нумайĕшĕ революцийе хирĕç пырасçĕ. Халĕ революци пуйансен йенне çавăрăнђĕ. Вăл, тĕрлĕ ђунсăр, ђĕресĕр суту-илў тăвакансене, хăйсен йапалисен хакĕсене темĕн тĕрлĕ хăпартса, ђухăн халăхăн йулашки йунне ĕçсе, хак тўлемесен выçлăхпа хăратса пуйтарать.

Патшалăх пурăнăçĕнђе, театăрта картинкасем улăшăнса артисĕсем ĕлĕкхийех йулнă пек, карттинкасем çеç улăшăнђĕç, ĕлĕкхи министр пулĕмĕсем, каруђ т. ы. хăйсен вы-

ранёнҫех йулҫӗҫ. Патшалӑх пурӑнӑҫӗ шӑлт ӗлӗкхийех йулҫӗ. Халӑх куҫне уҫаҫҫен ҫапла тӑрӗ. Халӑх ыйхӑран вӑрансан ҫеҫ ултавҫӑсен вӑййи пӗтӗ. Халих хӑйне улталаса пурӑнакансене пӗтерипҫен, пур те ӗлӗкхи пекех йулӗ, тет.

Мӗшӗн халӑх улталаннине шухӑшласа пӑхсан, вӑл: Ҫухӑн халӑх хӑйсене тытканра тытнӑ пуйансемпе, улпутсемпе, т. ы. кирлӗ-кирлӗ марпа вӑрҫнӑ ҫух, хӑй нумайӑшне ҫул ҫинҫе мӗн тӑнине, пӗтӗмпех йӑвантарса пӗтерет, йулашкинҫен каллех тыткӑна кӗрсе ӳкет.

Хӑй сукккӑррипе, малашне мӗн пуласса пӗлменнипе, вӗренменнипе, хӗҫ—пӑшал ҫуккипе, хӑйсене илсе пыракан сын ҫуккипе, ҫухӑн халӑх тӑшманӗсене ҫулӗ ҫинҫен пӗр йӑвантарса ҫеҫ йарать, йӑвӑнниисем тӑрасси ҫинҫен вӑл шухӑшламасть те, хӑй „ҫийеле“ тухнипе савӑнать. Анҫах хайхи йӑванса выртакансем сиксе тӑрса, вӗсен хушшипе сурӑх тирӗ тӑхӑнса кӗре-кӗре кайсҫӗ. Систермесӗр, сасартӑк ҫавӑрса илсе, ҫухӑнсене каллех пӑхӑнтарассӗ. Франци революцийе те ҫаплах пулҫӗ. Ҫухӑнсем хӑйсен хушшинҫе пӗр ырӑ сын кӑна пулҫӗ тессӗ. Вӗсемпе пӗрле пур те тӑшман йӗркисене пӗтересшӗн тӑраҫҫӗ пулӗ тесе шухӑшлассӗ. Анҫах улталасҫӗ. Кив йӗркесем ҫине пурте тӑмассӗ: вӗсене (кив йӗркесене) тӗреклентерсе: улпутсем, пуп-таврашсем, ҫын ӑ сынсем, пуйансем, вӗреннӗ-сынсем, кӗнеке тавраш ҫыракансем тӑрассӗ. Вӗсенҫен кӑм та пулин малтан халӑхпа пӗрле пулнӑ пулсан та, вӗсем халӑх хушшинҫе ытла нумай тӑмассӗ, кӑшт вӑхӑт иртсенех халӑха хирӗҫ кайассӗ, халӑха шантарса ҫитсен, вӗсен аслӑ вырӑнсене кӗрсе ларассӗ, ӗлӗкхи пекех халӑха ӗме пуҫлассӗ, вӗсем ҫумне ӗлӗкхи сӗлӗхсем сыпӑҫассӗ.

Революцийе, ӗҫлекенсем, хресҫенсем, вӗт-шак сутӑҫсем, тӗрлӗ вӗт маҫтӑрсем, пӗр сӑмахпа каласанҫ хура-халӑх тунӑ. Анҫах революци ҫӗрлӗ сынсене, ҫынлӑ сынсене ырӑлӑх турӗ. Хура-халӑха хӗн-хуртан пуҫне, хуйхӑ-суйхӑран пуҫне урӑх нимӗн пулман, тет.

Хура-халӑх ирӗклӗх илесшӗн тӑрӑшни ҫинҫен ҫырнӑ ҫух, Марат Карл Маркспа Энгельс пек шухӑшлать. Анҫах унӑн шухӑшӗсем, Карл Маркс шухӑшӗ пек, сарлаках мар. Марата ҫав йенҫен К. Маркс шухӑшӗсен пуҫламӑшӗ теме те йурать. Вӑл халӑх вӗренсе ҫитеймен вӑхӑтра, Карл Марксран малтан пӗр 50 ҫул пурӑннӑ. К. Маркс вӑхӑтӗнҫе пурӑннӑ пулсан, пур йенҫен те К. Маркс пек шухӑшланӑ пулӗ-ҫҫӗ.

Марат вӑхӑтӗнҫе пурӑннӑ сынсем пӗтӗм халӑха виҫӗ пайа уйӑрнӑ: 1) улпутсем, 2) пуп-тавращӗ, 3) ытти халӑх. Ҫав виҫҫӗмӗш пайа ӗҫлекенсем, хресҫенсем, суту-илӳ тава-

кансем (шултăрисем те, вĕттисем те) хапрăк-савăт куçисем, тĕрлĕ мастăрсем, банксем тытакансем, ытти тĕрлĕ ĕçпе пурăнакансем кĕнĕ. Марат виççĕмĕш пайĕ пĕр маррине, вăл тĕрлĕ тĕрлĕ çынран пулнине, вĕсен шухăшĕ, вĕсен кăмăлĕ пĕр маррине лайах курнă. 1792-мĕш çулта вăл:

„Францири халăх, ытти патшалăхри халăхсем пекех, темиçе пайа уйăралса тăрат. Çав пайсем пĕр пĕринҫен, пĕр хăйсен шухăшĕ-кăмăлĕпе (интерес) кăна мар, ытти йенҫен те пит уйрăш тăрассĕ. Кашни пайĕн пуйанлăхĕ, патшалăхра мĕнле вырăнта тăрасси, пĕр пĕрине пăхăнтарса тăрасси, тĕрлĕ, хăшĕ иттине хăйне пăхăнтарса пурăнат, хăшĕ тепĕррин пăтĕнҫе ҫурара тăрат. Вăл кăна мар, аҫа ҫухне аишĕ-амăшĕ ăна ӳстерни те, вĕсен йăлисем те, пĕр сăмахпа, пĕтĕм пурăнăçĕ урăхла.

„Епĕ улпутсем, пуп-тавраш сем, ҫиклă-çынсем, пуйансем, вăтамсем, йулашкинҫен ҫухăнсем, урăхла каласан, пĕр йенҫен асаплантаракансем, тепĕр йенҫен асапланаканнисем çинҫен каласшăн. Çав пайсем, ушкăнсем пĕр патшана-каруҫа пăхăнса тăрассĕ, пĕр пĕрне ĕмĕр, ĕмĕрех ҫунтан кураймассĕ. Асаплантаракансем, иттисем çине, весен валли ҫуралнă, вĕсен тирĕсене сӳмелле, вĕсен вăйĕпе мăнтăрланмалла, ҫурара тытса шухăша мĕн килнĕ çавна тутарттармалла, тесе шухăшласа пăхса тăнă. Ҫухăн халăх вĕсен пуйанлăхне уйăрасси çинҫен çеç шухăшланă.

Йулашки сăмахсем унҫухнехи ҫухăн халҫхи пек шухăшламаннине, пĕр пуйанлăха уйăрса йарасси çинҫен шухăшланине кăтартат. Халҫхи ҫухăн ĕлĕкхи ҫухăнран пит те инçе кайнă. Халҫхи ҫухăн пĕр пуйасен пуйанлăхне уйарасси çинҫен кăна шухăшламаст, вăл пĕтĕм патшалăх ĕçне хăй аллине илсе, пĕтĕм ĕçе хăй туса тăрса, ҫухăн-халăх пурăнăçне ĕмĕрлĕхе телейлĕ тăвасшăн, ĕмĕр сăлĕх ан пултăр, пур те пĕр пек, пĕр тан пулҫҫăр тесе тăрăшат.

Марат малалла: каруҫ ларнă ҫух, вăйлă ҫух, улпутсем вĕсене кăшланипе, халăхăн виççĕмĕш пайĕ пĕрлешнĕ. Пĕрлешсе вăл кив йĕркесене хирĕç тăнă. Анҫах вĕсем çĕнеймен, вĕсене хирĕç тăракансем çийеле тухнă.

„Пуйас шухăш вĕсене пайран пайа уйăрнă, ĕлĕк тăшмана пĕтерес тесе пĕрлешнĕскерсем, вĕсем каллех уйăрăлса кайнă. Бастилийана илсе кăшт çийеле тухнăскерсем, пархатăрлăх çуккипе, кашни ҫасрах пуйас тесе шухăшланипе, вĕсем тусса кайрĕç. Карттинка çыракансем, улпутсем валли тĕрлĕ илемлĕ йапала тăвакансем, сут тăвакансем, революци пирки хăйсен тупăшĕ кĕскелнине курсанах, хăйсем тунине шелле пуçларĕç, улпутсем патне кайса, вĕсене вăйлăлатрĕç,

ылтăва йуратни вĕсене ĕлĕк хăйсен мăйĕсем çинҫе ларнисемпе пĕрлештерҫĕ.

Париш сутăçĕсем (суту-илӳ тăвакансем) каруҫпа, унăн тавра пурăнакан йытăсем пе, ытти улпутсемпе çеç пурăннă. Маратăн йулашки сăмахĕсен суту-илӳ çыннисене каруҫпа ун çывăх çыннисем мĕнле хаклине кăтартассĕ.

„Халăх шанҫăкĕпе асаплантаракансем хăйсен валли пит аван ĕç тунă. Пирĕн пек, революцийĕ пĕр пустуй сăмахлани, офицерсем йăлтăр-йăлтăр çӳрени, илемлĕ йурлани вăйлăлатат, тесе шухăшлакан халăх тĕнҫере урăх çук-та. Епир сăвара карса пăхса тăнипе, пире асаплантаракансем аслă вырăнсене, саккун тăвакан пухусене кĕрсе ларҫĕç. Хамăрпа тан тăвас вырăнне, хамăра тивĕçлĕ вырăнсенҫе хамăр ларас вырăнне, вĕсене пур çĕре те кӳртсе йарса, каллех вĕсен аллинҫе йултăмăр“.

„Мĕнле кулă, намăс! Йепле есир пĕр самавта та пулин улталантăр-ха? Есир-пурсăмăр та епир пĕр тăван, тесе савăнтăр, революци праçникĕнҫе ташларăр. Йапле есир пĕр сăмахпа çеç вĕсен (асаплантаракансен) кăмăлĕсене улăштарас çуккине мантăр-ха?“, тет.

Кайалла çаврăнса пăхса, революци пуçламĕшĕнҫе аслă вырăнсенте тăнă çынсене астуса, Марат хуйхăрат: Çав пуйансем йуратнă çынсенҫен пĕрите ирĕклĕхе йуратман, пур те ăна курайман. Пур те вĕсем ирĕкрен ытларах миталсене, ҫинсене, аслă пулса ыттисене хушса пурăнассине йуратарах панă. Аслă вырăнсенҫе ларнисенҫен нумăйĕшĕ хăравçă, кăшкăрма йуратакансем, укçа йуратакансем, ыра шухăсăрскерсем, ирĕклĕхе йурăхсăрскерсем, йулташсене сутса йама хатĕрскерсем, тет.

„Халăх тусĕ“ çинҫе 1792 ç. çурла уйăхĕн 14-мĕш кунĕнҫе вăл: Франци революцийĕ тăршшĕпе тенĕ пекех кулă, енҫетрен, пĕрре ыра, вырăьлă. Бастилина илсен виç-тăват уйăх тăршшĕпех хула çыннисем, салтак тумтир тăхăнса, хăй çине йенҫен йенне пăхкаласа çеç иртернӗ, тет.

Пуринҫен ытла çав кулăшла йапала Национални Собранире. Ĕнтĕ виç çул епир патшалăхăн кĕтессисенҫен килекен çынсене куратпăр. Вĕсем Национални Собранийĕ, аслă ĕçсем тунăшăн, çĕнĕрен кăларна ыра йĕркесем пĕтĕм халăха ыйткалакана кăларнăшăн, ирĕклĕхĕн ыррисемшĕн, (тӳррĕн каласан куç çулĕнҫен пуçне нивам курман), патшалăх ҫеҫек пек саралса илемленсе кайнăшăн (ҫăнтан каласан, патшалăх пĕтнинҫен урăхх и çук) тата ытти çук ĕçсемшĕн тав тăвассĕ. Ку ĕç пуҫҫе-и-ха?, тесе çыраť.

„Халăх тусĕ“ каллех хупăннă. Авăн уйăхĕн 11-мĕш кунĕнче 1793 çулта пур касăра та хут çапса тухнă. Марат: халăхăн хула ĕçне туса тăракан управăн, Законодательни Собранирен шăршланнă çынĕсесене кăларса ывăтăс пулат, атту каллех чухăн йунĕ çырмаланса йуха пуçлĕ. Революцийе хирĕç тапранасран хăраса тăрăр! Сирĕн тăшманăрсем, вăхăт çитсен, сире шеллесе тăрас çук. Çавăнпа хăвăр та вĕсене ан шеллĕр! Есир часрах Законодательни Собранирен, хула управĕнчен, тĕрлĕ урăх вырăнсенчен, халăха хирĕç тăракансене кăларса пăрахмасан, сирĕн ирĕкĕн кунĕсем пĕтĕç! тесе çырнă.

Çавăн хыççăн кăшт тăрсан, Марата хула управне суйланă, вара Конвента суйланă. (Законодател. Собрани вырăнне Конвент тухнă, вăл саккун кăларакан пухуран та асла пулнă).

VII.

Çав вырăнсенче ĕçленĕ чух, вăл ирĕк вăхăтсенче кăна хаçат кăларма пултарнă.

Вăл вăхăтра якобинский клуб вăйлăланса кайнă. Çав клубра Марат та тăнă. Вăл клуб хура—халăхшăн тăрăшнă.

Революци Паришрен улпутсене хăваласа йанă, карулĕ патĕнче тăранса пурăнакан хурт-кăпшанкă харпăр йеппе туснă. Хулари чухăнсем вăйлăланнăçем вăйлăланса пынă.

Пуйанлăхпа Францире, Париш, вăл вăхăтра ытла иксĕ кайман, Паришрен пуйан хуласем те пулнă. Çав хуласенче улпутсĕм ниçанта ытла вăйлă пулман. Унта революцичен те, революци вăхăтĕнче те, хапрăк-савăт хуçисем, пуйан сутăçăсем пит вăйлă пулнă. Жиранда (Луара) йатлă çырма тăршшĕнчи хуласенче çапла пулнă. Хăйсенчен вĕсем атваккатсене суйласа йанă Конвентра вĕсем ытти çĕртеп килнĕ пĕр шухăшлă çынсемпе пĕр ушкăн тунă, çав ушкăна çырма йачĕпе Жирондистсем тене.

Пуйансене, революци малалла туни, кăмăлĕсене кайман. Париш чухăнĕсем Бастилиăна илни, Законодат. Собранийе часта антăратни вĕсене таксăнах хăрата пуçланă. Халăх хăй ĕçне тунă

Чухăн—халăх кив йĕркесене пĕтере пуçланă, пуйансем йуратнă министăрсене вырăнтан кăларса пăрахнă, вĕсен вырăнĕсене çĕнĕ ырă çынсем валли тасатнă. Мĕн çитмен тата халăха, мĕн кирлĕ мар çĕре вăл сысна пек пуçне чикет? Çĕнĕ йĕркесем тума тесе çын суйламан-и-вара? Хăйсен пу-

ранӑҫве тума вӗсене ирӗк панӑ-ҫке, тата мӗн кирлӗ вӗсене, мӗшӗн вӗсем ҫын суйласа йама вӗренеси ҫигмен-ха, вӗренсен вӗсене те ирӗк пулӗ, тесе шухӑшлана пуйансем.

Вӗсӗн пӑлхавне пӗтерес пулат! вӗсене кӑшт лӑплантарас пулат, хӑрисене кӑшт хӗстерес пулат, тесе шухӑшлана пуйансем.

Хайсен ҭӗре тӗпӗнҭе ларакан шухӑшӗсене ӗҫе кӳртнӗ ҭух, вӗсем пӗтӗм халӑх ӗҫне тунӑ. Париш ҭухӑнӗсем мӗн те пулин тума хушсан, вӗсем, ку ӗҫе пӗтӗм халӑх тумалла, сирӗн ӗҫӗр мар, тенӗ. Париш пӗтӗм Францин 83-мӗш пайӗ кӑна. Париш хушнине пӗтӗм Франци итлесе тӑмалла мар. Тӳре-Шарапа Конвент Париш ҭухӑнӗсэм хыҫҫӑн пымаллипе, Тӳре-Шарапа Конвент Париш ҭухӑнӗсен аллинҭ н ҭас тухасси курӑнманнипе, вӗсен ӗҫӗсене кӑшт кӗскетмелле тунӑ: ӗлӗк Паришре тунӑ ӗҫсенҭен нумайӗшне ҫав пайсен, кӗпернесен аллине йанӑ.

1791 ҫулта (июнь) уйӑхӗнҭе Эн департаменҭен (кӗперниҭен йанӑ хут ҫине: Париш сасси—мӗн пур Францин 83-мӗш пайӗн сасси, тесе ҫырнӑ. Конвент тӑваттӑмӗш кун пухӑнсан Ласурс йатлӑ шировдист: Енӗ Париш пӗтӗм Франци ӗҫне, кирлӗмар ҫынсем хушнӑ тӑрӑх туса тӑнипе хирӗҫ пыратӑп. Ӗлӗк Рим патшалӑхӗнҭе пӗтӗм ӗҫе Рим хули туса тӑнӑ пек, Париш те Франци ӗҫне тӑвасшӑн. апла тума йурамаст, Париш Францин 83-мӗш пайӗ, ӑна пӗтӗм ӗҫрен пӗр 83-мӗш пайне ҫеҫ парас пулат, тенӗ. Унпа пӗр шухӑшлисем ҫав сӑмахаем хыҫҫӑн темӗн тӗрлӗ алӑ ҫупнӑ... 1892-мӗш ҫулӑн авӑн (сентяврь) уйӑхӗн 25-мӗш кунӗнҭе пӗр широндист Конвентра: Париш хура-халӑхӗ ҫӑтӑхса кашни кун мӗн те пулин хайсене ҫеҫ аван тума хушса тӑнипе, Конвента ӗҫ тума паманнипе, йури вӗсене ҭарса тӑма тесе ҫар тӑвас, тесе ӗҫ хунӑ.

Ак ҫапла ӗҫлеме шухӑш тытнӑ пуйансем суйласа йанӑ ҫынсем—шировдистсем. Анҭах урӑхла шухӑшлана Парижри революцишӗн тӑрӑшакансем. Вӗсем Париш Франци революцийӗн ҭӗри пулса тӑнине лайӑх пӗлнӗ. Революцишӗн, пӗтӗм халӑха ырӑ тӑвассишӗн Париш вӑйне пӗтерме мар, тата ытларах ҫӗклемелле пулнӑ. Ҭӑнах та кам вара Бастилие пӗрле улпутсен кив йӗркине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ?

Кам тарнӑ карулҭа Парише кайалла кӳрсе, вӑл тӑвас усал ӗҫсене пӗтерпӗ? Кам вара революцийе хирӗҫ тӑракан ушкӑна тупса пӗтерсе, пӗтӗм Францийе ҫитес хӑрушӑ кунсене кайалла ҫавӑрса йанӑ? Мӗн пурне ҫавна Париш халӑхӗ тунӑ! Вӑл—революци пуҫлӑхӗ, ҫав пуҫлах пулса малашне те тӑмалла.

Ҫав вăрҫă революципе революцийе хирĕҫҫин вăрҫи пулнă, революци туса хăйне нимĕнле ырăлăх туман халăхпа, халăх пушатнă ырăнсене кĕрсе ларнă пуйансен вăрҫи пулнă. Хăй шухăшне тăвас тесе, хăйне нумайрах тупăш тупас тесе, хăйсене ирĕкрех тăвас тесе, пуйансем 16-мĕш Людовика пит те пысăк усă тунă. Марат па йулташĕсем каруҫа сут тăвас тенĕ ҫĕрте, пуйансем йепле те пулин вăл ĕҫе тăсса пынă (Каруҫ вăл вăхăтра тĕрмере ларнă).

Ҫак вăрҫă широндистсемпе якобинецсен вăрҫи пулнă. Широндистсем каруҫа ҫăлайман, хăйсем айала пулса нумайĕшĕ ҫĕҫĕ айĕнҫе вилнĕ. Пуйансен вĕреннĕ ҫынĕсем, пал лах, широндистсемшĕн йĕрессĕ. Вĕсен шухăшĕпе якобинтсем ҫунсăр, ҫĕресĕр есрелсем, хăйсен аллине ирĕке 'илес тесе, хăйсен тăшманĕсен йувне пĕр шеллемесĕр тăкакан тискер кайăксем.

Марат шухăшласа тăркаламасăрах якобинсен йенне кайнă, пĕр ҫавшăн та пулин пуйансен вĕреннĕ ҫыннисем ăна нумайă силенме ҫителĕклĕ пулнă.

Паришри ҫухăнсен пурăнăҫĕ наҫартан наҫар пулнă. Хут укҫа темĕн ҫухлĕ кăларса тăнипе, кирлĕ йапаласен хакĕ калама та ҫук уссе кайнă, кашни кун хак ўссе пынă. Пуйансемшĕн тăрăшакан широндистсем, хака ҫакарма шухăш тытма мар, ăна хирĕҫ пынă. Вĕсем пуйанлăх тăрăх куланай тўлесшĕн пулман. Пуйанлăх тăрăх тўлĕмелле саккун тăрăх, пуйаннисем укҫа, йĕ урăх пуйанлăх тăрăх ытла тўлемелле. Вĕсем (жирандистсем) хунă хак тăрăх суту—илессе хирĕҫ пынă. Вĕсем ирĕксĕрлесе кивҫен укҫа йамалла тăвас тенĕ саккуна хирĕҫ пынă. Ҫав саккун тăрăх кам мĕн-ҫухлĕ пăрас тенийе иртмест, мĕлйун тенкĕлĕ ҫын ҫĕр пин тенкĕлинҫен вунă хут ытларах, ҫĕр пин тенкĕли вунă пинлинҫен вунă хут ытларах патшалăха укҫа кивҫен памалла. Ҫапла укҫа тупса хулари ҫухăнсен валли тырă илессе жирондистсем хирĕҫ пынă. Вĕсем пуйансем ҫухăн валли кăштă та пулин ырăлăх тăвасса хирĕҫ пынă.

Хăш-хăш вăхăтра ахалҫте тырăсăр аптăранă Парише тырă пыма ҫаранна. Вара ҫухăнсен пурăнăҫĕ пĕтсе ларассах ҫитнĕ. 1792-мĕш ҫулăн раштав уйăхĕнҫех Паришре тырă хахĕ калама ҫук пысăк пулнă, кăшт тăрсан хаксем тата хăпарса кайнă, ҫав хакпа та нимĕн тупмалла мар пулнă.

Ҫавăн пирки жирондистсемпе Маратăн вăрҫă тапранса каймалла пулнă. Марат ҫасрах йепле те пулин Париш халăхĕ валли тырă, ытти кирлĕ йапала кўме май тупма, хаксене усесрен ҫарма хушнă, Вăл хак мĕн пирки ўсвине шухăшласа тăма йуратман. Вăл тапранса кайнă вăрҫă темĕн

ҫухлӗ укҫа пӗтерниие пӑхман. Ҫав укҫасем вырӑнне ҫӗнӗрен ҫӗнӗ хут укҫа кӑларса пыни хаксене ӳстерниие вӑл шухӑша илмен. Вӗт лавкаҫсем, ҫӑвӑр—тӑвар пӗҫерекенсем хӑйсем йапала пысӑк хакпа илсе, хӑйсем хӑш ҫух сийен, сӑтӑр курвине вӑл ӑнланасшӑн пулман. Ҫавӑн пек пысӑк ӗҫсем ҫинҫен ҫырмасӑр, пӗҫӗк сӑлтавсене пӗтӗмпех пуйансем, суту-илӳ тӑвакансем ҫине йавантарнӑ. Анҫах нумайӗшӗ ҫав сӑлтавсенҫен ҫӑв пулнӑ Марат хушнӑ пӗк тунӑ пулсан, Париш халӑхӗн ҫурӑнӑҫне ҫӑнах та ҫӑмӑллатмалла пулнӑ.

1794 ҫ. нарс уйӑхӗн 25-мӗш кунӗнҫе Марат: Мӗн тавлашмалли, пӗр тавлашмасӑрах, пуйансем, шултӑра суту-илӳ тӑвакансем, улпутсене кирлӗ тӗрлӗ илемлӗ, хаклӑ йапаласем тӑвакансем, ҫинлӑ ҫынсем, ӗлӗкхи улпутсем, пур те вӗсем ӗлӗкхи йӗркесемшӗн тӑрӑшассӗ, теме йурат... Вӗсене ӑнлантарса пирӗн ӗҫе йурӑхлӑ тума май тупас ҫукки пе, епӗ, вӗсене пӗтӗмпех пӗтерсе пӑрахса, патшалӑха йӗркене кӳртмелле, тетӗп. Халӗ вӗсем йепле те пулин ҫухӑн халӑха пысӑк хаксемпе аптӑратса, выҫӑ вӗлерме ҫитӗрсе, хӑйсен ӑллине илме тӑрӑшассӗ.

Вӗсем аптӑратса ҫитерне халӑх нийепле те ҫав ирсӗр хура ҫӗленсене пӗтерме тытӑнаймаст, ҫавӑнпа савӑннӑ улпутсем—пуйансем суйласа йанӑ ҫыннисем ӑна курса савӑнаҫҫӗ, тата пусмӑрлама хӗт—хӗртессӗ, пӗтерсе пӑрахас вырӑнне. Ҫавна кура, йепле ӑнтан кайнӑ халӑх хӑйне тивӗҫлине хӑй ӑллине илменни шалтах ӑсран йарат. Халӑх суйланӑ ҫынсен йулашкинҫен, ахаль шавласа ирттерес вырӑнне, мӗн те пулин тума тытӑвма вӑхат ҫитнӗ ӗнтӗ.

Пӗр саккун кӑларса ларни выҫ халӑха пулӑшмаст. Епир ҫав саккунсем пире мӗн те пулин ырриие панине курман. Пире пӗр революцилӗ ӗҫлени ҫеҫ пулӑшма пултарат. Халӑха сыхӑ усрас йенӗпе тунa комитете (комитӗт общественной безопасности) ҫав ӗҫе пӑхса тухма парас пулат. Унтан пуҫне епир мӗн те пулин ырриие шухӑшласа тупас ҫук. Вӑл ытла хак ӳстерсе тӑраканиисене сута парса, патшалах ӗҫне хирӗҫ пынӑ ҫынсе сут-тунӑ пек тутӑр.

Унтан пуҫне епӗ тепӗр ытла аван май пӗлетӗп. Вӑл ӗҫе пит те ҫас тӑвӗҫҫӗ. Пуйан ҫынсен пӗрлешсе йут патшалӑхсенҫе халӑх валли тырӑ илсен-ҫҫӗҫ. Франциие исе килсе хӑйсене ларнӑ хӑкпа халӑха салатин-ҫҫӗҫ. Ӑна тума ырӑ ҫын, ырӑ кӑмӑл кирлӗ. Пирӗн ултавҫӑсен патшалӑхӗнҫе, пирӗн ҫухӑн халӑх тирне сӗвес тесе пурӑнакан патшалӑхра ырӑ кӑмӑллӑ ҫын тупайас ҫук. Анҫак ҫак йӗркесӗр пурӑнӑҫ нумайа пыма пултараймаст. Кӑшт тӑрсан пирӗн халӑх та хӑйне йепле ҫӑлассине пӗлӗ.

Капла ҫырни, Марат тыра-пулă, ытти кирлĕ йапала йепле тупмаллине, пурлăх—тĕлеш ĕҫне пĕлменнине пĕлтерет.

Вăл ҫав ĕҫе пĕлменнипе ҫаста кирлĕ марла шухăшлавă. Марат патшăлăх йĕрки йенҫен хастар пулнă, анҫах пурлăх—тĕлеш йенҫе нумайах пĕлмен.

Анҫах Марат пит аван Париш ҫухăнсен шухăшне, пурăнăҫне пĕлнĕ. Халĕ ҫырса тухна статйа 1793 ҫ. нарс уйахĕн 23-мĕш кунĕнҫе тухнă. Ҫав хаҫата урама илсе тухиҫен, выҫҫа ҫитнĕ халăх лавкасене ҫĕмĕре пуҫланă.

Марат статйи, халăха пурăнăҫне ҫăмăллатмалли мар, йнвăрлатмалли ҫул кăтартса панă. Анҫах ҫав ĕҫре Марат айăплă пулман. Халăх тырă лавкисене Марат статйине вуличен пĕр ик-виҫ сехет малтан ҫарата пуҫланă. Выҫлăх ҫав ĕҫре айăплă пулнă.

Анҫах Жирондистсем Марата, халăха лавкасене ҫаратма хĕтĕрĕртнĕшĕн сута панă. Ĕҫ Марата ҫийеле кăларнă.

Ҫавăн хыҫҫăн Жирондистсем Марата урăх статйасемпе халăха чăлхатса, вăрҫă тапратасшăн пулвăшăн сута хунă.

Ака уйăхĕн 24-мĕш кунĕнҫе Марат сута пырса тăнă. Сут айăп тупман. Марата кĕтнĕ халăх, вăл тухнине курсан, йатса халăх тулли урамсем тăрăх ҫӳренĕ.

Марата ҫапла ҫухăн халăх тав-тупи Паришри пĕтĕм пуйана ҫилентернĕ, ҫилĕнне пуйансем ниҫта кайса кĕме пĕлмен. Жирондист хаҫаҫĕсем Марата ҫисе йарес пек ҫашлата пуҫланă. Вĕсене Марата вăрă-хурах пуҫлăхĕ тесе ҫырни ҫитмен, „Халах Тусĕ" йут патшалăх укҫипе ҫапăнат, Марат йут патшалăха Францийе пăлхавсемпе ҫемҫетесшĕн сутăннă ҫын, тесе ҫырнă.

Ҫу уйăхĕнҫе 1793 ҫ. пуйансен ывăлĕсем, пуйан студентсемпе Паришре касăсем тăрăх митингсем туса ҫӳренĕ. Ҫав митингра пуринҫен ытла Марат ҫинҫен шавланă. Ҫав пуйансем, нимĕн усă тумасăр пурăнăҫ ирттерекенскерсем, йака тумланса ҫӳрекенскерсем Жирондист хаҫаҫесем ҫырнинҫен ытла каласнă. „Вăрă-хурах пуҫлăхĕ, йут патшалăха сутăнвăскер... ҫасрăх уна ҫакса вĕлермелле" тенĕ сасă кăна тăнă. Вĕсем урăх нимĕн калама пултарайман.

Вĕсем ҫу уйăхĕн 10-мĕш кунĕнҫе Марата килне тавранвă-ҫух ҫавăрса илсе патаксемпе хĕне пуҫланă, анҫах Марат тусĕсем ҫупса ҫитсе йыт кĕтĕвĕне салатнă.

Пуйансем аран-аран хăйсен курайман тăшманĕ вилнине кĕтсе ҫитнĕ. Ҫĕртме уйăхĕн 13-мĕш кунĕнҫе 1793-мĕш ҫулта Жирондистсемпе пĕр канаш пурăннă Шарлота Кордэ Марата киншалпа ҫиксе вĕлернĕ. Ухмахскер, Францийе тăшманран ҫăлатăп тесе шухăшлапă пулмалла.